*Пĕчченлĕх*

# «Хăшне суйлам-ши?»

**Пурнăçра темĕн те пĕр курма тивнĕренех ватă-сем: «Ĕмĕр сакки сарлака», – тенĕ пулĕ. Ыррипе усалли юнашарах çӳреççĕ. Хăйне ыран мĕн кĕтни-не никам та пĕлмест. Хура-шур курман çын çуках-тăр. Пуянни пурлăхне çаратасран, чухăнни пур-нăçне епле сыпăнтарасчĕ тесе, виççĕмĕшĕ пĕччен тăрса юлнишĕн кулянать.**

Пĕррехинче Муркаша кайсан юлташа тĕл пул-тăм. «Эх, мĕн пурăнни, йывăрлăха кĕрсе ӳкрĕм вĕт, – терĕ. – Кам шухăшланă-ха мăшăрлă, ача-пăчаллă çĕртех кил-çурт пушанса юласса? Ачасем çитĕнсе саланчĕç, арăм вилчĕ, халĕ эпĕ тăр пĕччен».

Эпĕ Муркаш районĕнчи Вăрманкас Сурăмра пурăнатăп. Çулсем самаях та – хĕрарăм пирки аса та илместĕп. Çĕнĕ пурнăç йĕркине чиперех хăнăхрăм. Иван вара манран чылай çамрăк, 62 çулта çеç. «Санăн хăвнашкал хĕрарăм тупмаллах», – сĕнтĕм ăна чунтан хĕрхенсе.

– Мăшăрăмпа танлашаканни пур-ши? – шухăша кайрĕ вăл. – Ялта пĕччен пурăнакан чылай-ха, анчах пĕри килĕшмест, тепри ĕçкĕпе иртĕхет. Унашкаллипе çыхланас килмест.

– Хаçата пĕлтерӳ пар, – терĕм юлашкинчен.

Икĕ уйăхран Иван вĕçтерсе çитрĕ. Кăмăлĕ хаваслă. «Те çавăнмалла ĕнтĕ, те кулянмалла, – тет. Сĕтел çине пĕр хутаç çыру силлерĕ. – Вуласа пăхсам эсĕ те. Пăттине пĕçерме вĕрентрĕн, халĕ пĕрле çийĕпĕр. Пулăш, хăшне суйлам-ши?»

Иван республика хаçатĕнче çеç мар, Мускав-ринче те пĕлтерӳ пичетленĕ. Ун патне пĕччен хĕрарăмсем Раççейĕн тĕрлĕ регионĕнчен, тухăç-ринчен пуçласа анăçри таранах çырнă. Сăн ӳкерчĕкĕсем те пур. Пĕри тепринчен чипер. Хăйĕнчен аслăрах ӳсĕмри те, икĕ хут çамрăкраххи те, пуянни-чухăнни, пыма чĕнекеннипе килме хатĕрри те... – мĕн тĕрли çук тăр? Кун хыççăн епле шеллемĕн вĕсене?

– Раççейре мансăр пуçне арçын çук-ши? – тĕлĕнет юлташăм. – Мана тиркесе чунăма ан ыраттар теççĕ. Хăшĕ-пĕри çак самантрах мăшăр пулма хатĕр.

Тĕлĕнмелле те: чăваш хаçатĕнче те пĕлтерӳ пичетленнĕ пулсан та пирĕн тăрăхран пĕри те çырман. Чăваш хĕрарăмĕ тӳсĕмлĕ, арçынсăрах ĕмĕр ирттерме вăй çитерет. «Пĕлтерӳ парса хăвăра валли инкек çеç тупатăр, – сĕнет Иван хăйĕн пек пĕччен шăпаллă арçынсене. – Телей кӳрекенсем юнашарах çӳреççĕ пулĕ-ха. Тимлĕрех пулмалла çеç».

Çак кунсенче хыпар илтрĕм. Иван шăпа пӳрнине кӳршĕ ялта тупнă иккен. Халĕ телейлĕ мăшăр шăкăлтатса çеç пурăнать.

**Валерий ПЕТРОВ**